671
№671
29-38

# ХĔРЛĔ СĂНĂ

Н. ЙЕВТОККИМĂВ

МАРК АТТАЙ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР 1929 ç.

29-38

Н. ЙЕВТОККИМĂВПА М. АТТАЙ

# ХĔРЛĔ CĂНĂ

ПАÇҪĂСЕМ, КĔРЕШӲ СĂВВИСЕМ, ТАКМАКСЕМ.

Ретактăр ИССАЙĔВ М.

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР 1929.

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Чувашская 6.

Чувашлит № 935 Заказ № 442 Напеч. 3000 экз.

# ЂĂН ТĔН ЫВĂЛĔ.

Кĕрме йалĕнђе Кириле пурнађђĕ
Вăл ђăн тĕнĕн ђăн ывăлех пулађђĕ:
Ђиркĕве çӳресси, кĕлтăвассиђђĕ ун ĕçĕ,
Халĕ сӳнђĕ çак етемĕнĕн пурнăçĕ.
Тӳррипелех каласан—вилнĕ вăл.
Мĕн тăвăн?
Турă çыннин пуçĕнђен
Ку тĕнђере те,
Леш тĕнђере те
Рай шухăшĕ каймасť.
Пирĕн Кириле те лере тĕк выртмасť:
Пикенсех вăл унта рай алăкне шыраť,
Унта та пыраť, лере те çитет,
Ăçта пырсан шакăр шăмă çеç кураť.
Маларах вилнисен
Шăммисем те йулман,
Рай алăкне тупакан кунта
Никам та пулман.
— Çук райа ăçтан тупан,
Терĕ те пирĕн Кириле
Кĕђĕ выртрĕ каллех тупăкне.
Çакăн пек Кирилесем пирĕн
Халĕ те сахал теме çук
Çамкасем шăтиђђен кĕл тусан та
Вĕсем рай алăкне тупас çук.

# Ҫӑпӑрка.

(Йуптару).

Ҫулпала тулли лав пырать,
Ҫӑпӑрки лаша патӗнҫех йӑваланать.
Пӗрре лаша ҫурӑмӗ тӑрӑх
Выртать вӑл ҫӑсӑлса,
Тепре хырӑм айне кӗрет,
Йе турта тавра пӗтӗрнет,
Йе тата, ҫул хӗррине ҫапӑнса.
Кайри кустармапа йунашар
Ҫӗлен пек пырать выҫаса.
Ҫул такӑр пулсассӑн
Ҫӑпӑркана та канлӗрех пулмалла.
Акӑ лупашка урлӑ каҫмалла.
Анаталла урапа хӑйех анҫӗ,
Хӑпарнӑ ҫух тата тӑпах ҫарӑнҫӗ.
Ҫитрӗ кунта ҫӑпӑркана ӗҫлеме.
Ак! Урапа каллах тапранҫӗ.
    Ҫа ҫа-ҫа-ҫа-ҫа-ҫа-ҫа!
Ҫӑпӑрки лашана:
    Ҫине ҫине
    Ҫурӑм ҫине!
    Хырӑм урлӑ
    Вирлӗ вирлӗ!
    Ҫине ҫине
    Ҫурӑм ҫине!..
Ей! Урапа калла анать!
Кустӑрма айне ҫул!..
Йурӗ, канмалла кӑшт!
Ну, аҫа тата! ҫа ҫа-ҫа ҫа!
Тата тата—тата! нумай мар!

Нумай мар! Нумай мар! Нумай мар!
Вӑ-ӑт ҫапла! Хӑпарҙё.
— Ну спаҫипех! Латнӑ хам пур,
— Кёрсех ларнӑҙҙё вёт шӑтӑка!
Тесе хуҙё вара ҙӑпӑрка.
Ҫакӑн йеверлё:
Пуйан Миких тарҫипе хиртен килет,
(Хӑй прусна тӑрӑх ёмёрне утса курман.
Йал ҙухӑнсем хӑй патне
Пёри те тара кёмесёр йулман)
— Килелле-им? терём те:
— Вара, суха пётертём-ха! терё.

## МИХАЛА.

Анат касри Тӑхтаман,
Кёркурипе Ухтине,
Хапха панҙи Ӑраман
Ирпеле утӑ ҫулма кайаҫҫё,
Ҫависене хулпуҫҫи ҫине ҫакнӑ,
Хӑйсем пёринҙен-пёри хытӑ утаҫҫё.
Лерен, тӳрё ҫулпала,
Васкаҭ тата Михала.
Кайнӑҫемён йыш хутшӑнса пыраҭ.
Калаҫу, шавлу кунта... Хура халӑх телейне—
тырӑсем
Ӑнӑҫлӑ пуласси ҫинҙен пуплеҫҫё.
Пуринҙен ытла Михала ҫухӑраҭ.
— Ха, Кёркури пиҙҙе,
Мёнле ҫава тыттарнӑ арӑмне!
Тесе тёлёнет Михала.
— Ма? терё леш.

— Ма пулаҫ? Курмастӑн-ши аварне?
Ҫӗр кукӑр мари!
Ху ҫавуна пасартан илтӗн-и? Мӗншӗн пит сӑнсӑр.
Пасартан пулмасӑр,
Хамӑр пасартанах.
— Ей, ухмах!
Суйлама хама ҫӗнмерӗн?
Авӑ, пӗлтӗр Ҫекли Пӑрмунне
Суйласа патӑм ҫавине.
Пӑхсан сӑн курӑнаҫ, куҫ кӗски кирлӗ мар.
Сасси! Ишек ҫанӗ пек йанӑраҫ.
Ҫапла Михала пурне те итлесе пыраҫ
Хӑй йап-йака та тап-таса.
Сӑмахпа вӑл ӗҫе ним вырӑнне те хумасҫ.
Ҫын тунӑ ӗҫе никҫан та ырламасҫ,
Шав шавласа, калаҫкаласа,
Ӗҫ ҫыннисем ҫаран ҫине ҫитрӗҫ.
Ҫитсенех харӑссӑн
Ҫависене хӑйрарӗҫ.
— Ну, кама малтан йарар, йулташсем!
Терӗ Тӑхтаман.
— Михалана йарас! терӗҫ ыттисем.
Лешин ҫави те туптаман,
Ҫави аври те ларайман.
— Ӑна кӗтсе пулмасҫ, аҫӑр! терӗҫ.
Вара ларан курӑка йӑвантара та ӗҫҫенсем,
пуҫларӗҫ.
Хайхи пирӗн Михала
Тӑҫӗ йулҫӗ хыҫала.
Ҫапла вӑл пулаҫ:
Сӑмахпа ҫынран иртекен
Ӗҫре хыҫалтан ҫеҫ пыраҫ.

Халĕ хĕрсем нумай ђух
Лайăххинех çаклатас!
Микик хĕрне илĕттĕм —
Сăмси пăртак пысăкрах,
Уншăнах та тăмăттăм—
Хулăм тути усăкрах,
Варук питĕ ăслă хĕр,
Ăна пурте мухтаççĕ,
Анђах урлă урисем
Арăш-пирĕш утаççĕ.
Ђипер хĕре Настука
Ман пек никам савайман —
Çак хĕр ашшĕ ђухăнпе
Тупра пĕртте пухайман.
Анат касри Тăхтапин
Йапали те ђылай тет,
Анђах ашшĕ ват Пархин
Хĕрне выђăх памасť, тет.
Аслурамри Кăраçук
Куçран пăртак вăйсăр та —
Аптăрасах кайас çук;
Унăн тупри виç арђа
Çурăлас пек лараççĕ.
Ăна сурăх, кађака,
Ват лаша та параççĕ.
Тумлă сумлă çак хĕре
Йепле вара илес мар.
Йухса кĕрен пурлăха
Мĕншĕн хапăл тăвас мар?
Ваççук тивĕç шухăшсăр
Илђĕ йађĕ Краçука.
Килђĕ пурлăх пĕр пуссăр

Çакă пуйан арăмпа
Пĕр пӳрт тулли йапала.
Карташ тулли выљăхсем.
Пурăнаççĕ савăнса
Çакă пирĕн çамрăксем.
Анђах тутă пурăнăç
Йалан телей пани çук,
Арăм пурлăхĕпеле
Етем ырă курни çук,
Ир пулат̆ те каç килет —
Çаплах кунсем иртеççĕ!
Кăраçукăн куçĕсем
Нађарланса килеççĕ.
Куçри мăкăл-мăкăлĕ
Аптăратат̆ мĕскĕне.
Таçта-таçта айакка
Йумăçа та кайаççĕ,
Кусар тăрăх шăтăка
Вĕрнĕ шыв та йараççĕ
Нимĕскер те пулăшмаст̆!
Пуљнитсана кайсассăн
Ваççук пĕлђĕ арăмĕн
Траххом ђирĕ пулнине,
Тухтăр „пулмаст̆“ тесессĕн
Тăкрĕ вĕри куççулне.
Çакă йĕкĕт авланни
Икĕ çул çеç çитетђĕ,
Унăн çамрăк арăмĕ
Суккăр пулђĕ хупланђĕ.
Сĕм пурăнат̆ Кăраçук
Упăшкине хуйхăртса,
Хаљ те пулин çав Ваççук
Çӳрет ăна çавăтса.

## ХУРА СЫСНА.

Вăхăҫёпе хёвел те
Никама та кирлё мар.
Çулла шăрăх кунсенҫе
Сыснана пит аван мар.
Пёр лупашка хёррипе
Пырат сысна ахлатса,
Хёвел хытă хёртнипе
Вăл шăрăхпа пăҫăхнă,
Лупашканăн варринҫе
Пыљҫăк çинҫе вăл выртнă.
Анҫах хёвел унтан та
Хăйён вёри çуттипе
Пирён хура сыснана
Хăваласа кăларнă;
Ниçта кайа пёлмесёр
Сысна утат хуйхăрса
Ним калама пёлмесёр,
Пёҫҫен пырат калаçса:
— Ах! Ах! Шăрăх...
Тупайăпши вырăн урăх
Кăшт çех выртса канмаллăх.
Ах! Ах! Шăрăх...
Çакă йăвăр вăхăтра
Выртăттăмҫё картара.
Шăрăх, шăрăх!
Ах, хăйамат хёвелё...
Хуçан аслă ывăлё
Паçăр кăна картаран
Патакпала хăваларё...
Ах шăрăх!

Кĕтеп вĕри вилĕме.
Кăна йăтă илтрĕ те,
Сысна патне çитрĕ те:
— Тата мĕн-ха Матĕрне?
Ан вăрç халĕ хĕвелпе!
Питне - куçна тасатсан,
Кăшт тасарах пурăнсан
Сана хĕвел пĕçермĕ,
Капла пикех аптратмĕ, терĕ.

## УЛА СЫСНА.

Ула сысна пĕрре ирхине
Те хăйех уçнă хапхине,
Пахђана кĕрсе кайнă инкемек,
Ахаллине те мар, сатлинех.
Авă вăл, мăн кăмăллă хуçа пек,
Мăшлатса çӳрет пĕђђенех.
Куљаť тăвам-ха, терĕ пуљ çав сысна та.
Ирпеле сатра лайăх ĕнтĕ ђăнах та.
Йăвăçсем çинђе сарă кайăксем
Ир ырлăхне мухтаса йурлаççĕ.
Айалта хĕрĕх те пĕр тĕслĕ ђеђексем
Ырă шăршине парса тăраççĕ.
Акă, хĕвел те çӳлтен ђалăшшăн
Сата пырса кĕђĕ йăвашшăн.
Мĕн пур ђĕрĕ ђун савăнаť:
Сатри те, сатра марри те.
Кăтра хурăнăн кăтра çӳлçи те
Пăшăлтатса калаçнăн туйăнаť.
Пирĕн сысна кунта нумайах тăмарĕ.
Çаврăнђĕ те вити йенелле утайрĕ.
— Ну, Хвекле, мĕнле-ха?

Аван пуљ сатра? Тĕрлĕ ђеђек умăнта,
Кайăк йуррисем... йепле ытарса
тухрăн-ха? —
Терĕ йупах ťыха сыснана,
— Ей, суйа! Ним ырри те çук унта!
Тесе хуђĕ лешĕ ťыхана.

---

Кун пек Хвеклесем,
Пĕрре икĕ пĕлменсем,
Етемре те сахал мар.
Ак хăшĕ—мĕн ун Советăн, тет. —
Мĕн унта!
Ку нађар, леш те нађар... Хăй ђăн та
Çак Хвеклерен уйрăм мар.

## ТАРКĂНСЕМ.

(Йуптару).

Пĕрре ушкăн йытă тем шут тытса,
Тухса карĕ йала пăрахса.
Ăçта кайаççĕ-ши,
Мĕншĕн тараççĕ-ши
Çав халђђенхи кил-çурт хуралçисем?
Паллах: хуçана çиленсе пуљ, темелле;
Пĕр çаврăнса пăхмасăр тараççĕ çак таркăнсем
Йуртаççĕ аслă вăрман йенелле.
Унта хăйсем шухăшлă кайăксем пур вĕсен,
Çавсемпе туслашмах шухăш пур йытăсен.
Туслашмасăр: кил-çурт хуралçи йытти те,
Упи, кашкăрĕ, ытти те —
Пурте ĕнтĕ вĕсем
Çивĕђ шăллă кайăксем;

Пуçра та пĕр шухăш: тытас,
Тулас та пăрахас.
Тулас тĕлĕшрен пирĕн таркăнсем
Вăрман кайăкĕсенђен пĕрттех те кайа мар..
Тата çакна та сире калама манас мар:
Вăрман кайăксемпе пĕрлешсе йытăсем
Йал çине килме шутлаççĕ.
Çак шухăшпа ĕнтĕ вĕсем
Вăрмана çитсе пыраççĕ.
Çитрĕç —
Унтан та кунтан
Вăрмантан
Тискер кайăксем тухрĕç,
Аслă ĕшнере
Ирĕкре
Пысăк канашлу турĕç.
Мĕн калаçса мĕн ĕç турĕç-ши çакăнта?
Ним те çук! йал çине кайма хăрарĕç!
Пирĕн таркăнсем пайан та
Сулăнса çÿреçĕ вăрманта!
Камши вĕсем таркăнсем?
Тейĕр есĕр мана хирĕç.
Ман шутпа—йута тарнă „шуррисем“,
Çавсене ђăннипех таркăн теме тивĕç.

## ПУШАРТА.

Каç пулнă. Вăхăт ђылай;
Пĕлĕт çинђе çăлтăрсем нумай.
Йалта кушак та çÿремест,
Шăп çеç. Пĕр сасă илтĕнмест;
Халăх та çывăрат вилнĕ пек..

Çак хушăрах таçтан
Муртан
Сикрĕ тухрĕ пушар инкемек.
Акă халăх тытăнђĕ пăлханма.
Ăçта пушар? Кам çунаť, тесе
Унтан та кунтан та кĕрлесе,
Ђупа-ђупа тухаççĕ урама.
Пăхаççĕ—потрепиттĕл лавкки пĕтĕмпе
Хупăрланнă хура тĕтĕмпе.
Çулăмĕ шалта
Айĕн те сийĕн йавăнаť,
Пушар сӳнтерме халăхĕ
Пĕр саманта пухăнаť.
Анђах вутăн алли вăрăм, патне пыма çук.
Лавкка таварне кăларма пĕртте майĕ çук.
Ђупкала тăраççĕ çыннисем.
Ех! теççĕ.—Ех, хаклă таварсем!
Так пĕтет халăх пурлахĕ, так пĕтет!
Лавкка саветушђи те хашкаса çитет.
Ах!—тет вăл,—ах, сывлăшне çавăрса йараймасť:
— Хам алсатуђ, тет,—лавккана йулнăђђĕ.
Пĕтрĕ! Пĕтрĕ! Иртнĕ ернере çеç илнĕђђĕ!
Хăйĕн куççӳлли кăшт çеç тухаймасť.

## АТĂЛ ХĔРРИНЂЕ.

Шупашкар ђаплă урамĕпе,
Росă Лйукçемпурк текеннипе,
Атăл йенелле ыткăнса
Пĕр майра пыраť васкаса.
Çине-пуçне пăхсан—кам майриши ку?
Тухтăрăн—ваккатăнши,
Йе кăмиссарăнши?—

Тесе ыйтмалла хăвăнтан ху.
Вăл ђăн та хăй йеверлĕ тумланнă.
Ав çине кĕске ђаплă паљтту тăхăннă,
Пуçра шĕлепке, урисенђе темĕскер,
Лăпсăрккаскер.
Пирĕн кукки курсан ĕнтĕ ку майрана
Тем те тупса калĕђђĕ.
— Ха! пăхха, тĕклĕ уралла тăманана!
Тесе вăрттăн кулĕђђĕ.
Кукки култăр та, пирĕн кулас мар.
Анти кайтăр вăл хăй çўлĕпе, ђарас мар.
Мĕншĕн ђармалла?
Унăн та хăйне кура ĕçĕ пулмалла.
Авă вăл Атăл хĕрринђе
Йехвин йĕкĕте тĕл пулђĕ.
Ал тытрĕç, çамрăксем паллашрĕç,
Унтан вăл ку сăмахсем тапратрĕç:
— Ну, Фимă! терĕ майри Йехвинне,
Ыран Сакса кайатпăриха?
— Сакса! Ыран!—тет леш майрине,
Çук! Кайас мар, ĕлкĕрĕпĕрха,
— Сан йалан çав—ĕлкĕрĕпĕрха,
Кађђа илетни мана, йе суйатни?
Кала!—терĕ майра хытах кăшкăрса,
Унтан татах хырăмне каçăртса:
— Пăх! тет—леменђĕ кунта, туйатни!
— Апла пулсан илес пуђ еппин,
Терĕ майрана Йехвин.

# „КАПКĂНĂН“ ХЁЛЛЕХИ ТАКМАКЁСЕМ.

Куђђăр Иван тем васкаса
Асли патне ир килнĕ,
Хапха умĕнђе кĕтсе тăрса
Питне-куçне тăм илнĕ.

Лавка хуçин—саветушђин
Тути темпе варланнă.
Пиђĕкинђи кăраççынĕ
Хĕл сулхăнпе пăрланнă.

Çăварни хăнин мăн Иванăн
Шăннă кайнă пӳрнисем.
Ĕçкĕ пирки çак айванăн
Тукмак пулђĕç аллисем.

Укри инке килне маннă
Виç кун ĕнтĕ хăнара.
Хăмăр ĕни çăмăлланнă
Пăруш хытнă картара.

Мăн хăнаран Çемен муђи
Таврăнаť тет килелле.
Маттур маткин кăкăр ађи
Ӳксе йулнă, пĕсмĕлле!

Марйа аппапа Петĕр пиђђе[н]
Пысăк инкек пулнă тет:
Кĕçĕн ывĕл сентре çинђен
Мăн лаххана ђăмнă тет.

Çырма тăрăх кӳ ђупаť те
Хĕлĕп çилĕ йур пухаť,
Ђăваш пӳртин ђӳређ çинђен
Кунĕн-çĕрĕн шыв йухаť.

Хёл сиввине тӳсеймесёр
Йурă тăсса йарари!
Пирён шкула хёл çухатрё
Йур айёнђен тупар-и!

## РАВНОПРАВИ.

Марйе инке йашка пёçерне те
Çемйисене апата ђёнет.
— Ађасем! тет.—Ашшё, килёр ёнтё!
Ларăр ђасрах, йашка сивёнет!
Хăй йеррипен сётел патне пырса
Тенкел çине ларђё сарăлса.
Ађисем те пёререн-пёререн
Кёрсе ларђёç йёркерен.
Ашшё! тет татах Марйе инке пирён.
— Лар! тет—мён ес пăхса тăратăн!
— Кай! терё леш—мён çын вырăнне ларатăн!
— Мён çын вырăнё, лар ав Хвекла çумёнђен!
— Кай теççё сана! Лар ав сётел вёçёнђен!
— Лар ху!—Кай теççё сана, ну!
— Ăçта кай?—Авă санăн вырăну!
— Ху кай!—Тăррр!!!—Ан ђыш! Ђышаймăн!
Равноправи халђ, асаймăн!
— Равноправи?! тет упăшки—Тăхтаха,
Пăăăрависем сана парамха!
Тытрё те вăл çӳçрен арăмне,
Тылласа анђах тăкрё хайхине.
Марйе инке те,
Кун хыçёнђен шăп пулђё,
Равноправи текенни те
Унăн вара çак пулђё.

# КАРТАРА.

(Йуптару).

Ирхине хуҫа пӳртрен тухиђђен,
Ёне сурӑха кӑлт тапрӗ уринђен:
— Илтрӗни, тет.— Кӗҫӗр пуртре мӗн турӗҫ?
Так ахаљ, вӗт, пӗр сӑлтавсӑр
Усӑсӑр
Еҫкӗ тунӑ; ҫуталађђен шавларӗҫ!
Мӗн ђул расхут тухмарӗ пуљ унта?
Ес пыр,—мӑшкӑлтӑк шыв ҫеҫ умӑнта.
Пирӗншӗн тесен
Ђӗпкӗм ҫӑнӑх ҫук вӗсен,
Мӑшкӑл!
— Ҫапла, ҫапла! тет сурӑх ёнене:
Манӑн та мухтас килмест вӗсене,
Ӑҫтан мухтас ун пек хуҫана?
Ав йӗркун пуҫа ҫеҫ ђикнӗђђӗ ырҫана,
Ҫапрӗ те мур пилӗкрен
Аран сӗтрӗнсе тухрӑм кӗлетрен.
Мӑшкӑл!
— Вӑл мӗн! Вӑл мӗн! тесе йађӗ ҫухӑрса
Мӑкла така тислӗк тӗм ҫине тӑрса,
Картине пӑхӑрха есир, карти мӗнле:
Унтан та кунтан ҫил вӗрет.
Умран та хыҫран йур кӗрет.
Мӗнле пурӑнмаллаха кунта хӗлле?
Ав ҫӗркӗ ҫӗр хута ђӗтресе выртрӑм,
Инкек! Картарах пуҫӑма шӑнтрӑм,—
Мӑшкӑл!
Ей, пӑйахам, есӗ суйатӑн пулмалла.
Йепле сан пек йӗкӗт шӑнмалла?—
Тесе тӗлӗнет кађаки такаран.

Ђим! Çилĕ кĕрĕ вăл, кĕмĕ теме çук,—
Кĕрĕ те каллах тухĕ картаран,
Анђах хамăра тухма ниçтан çук—
Çĕрле те картара, кăнтăрла та çакăнтах,
Пăђлан хăйаматăн картинђе,
Мăшкăл!
— Ђăн, ђăн, ђăнђăнах!
Тесе выртаť сысни улăм айĕнђе.
— Капла пулмасť! Ђимĕрха йулташсем!
Терĕ пĕри.—Ав хăй килет, хăйне калас!
— Калас! Калас! Каламаллипех калас!—
Тесе кăшкăрса йађĕç ыттисем.
Ак хуçа та çитсе кĕђĕ. Вăл сиввĕн
Хăйсем çине пăхнипех хайхисем пирĕн
Кушак пекех йăпшăнђĕç—
Пĕри уçаймасť çăварне!
А калассине?..
Калассине ырана хăварђĕç.

———

Аслисем çинђен те хăш ђух
Çакăн пек шавлаççĕ,
«Калассисем» анђах
Ырана йулаççĕ.

## ПАТТĂР.

Пĕр паттăр пурăна пурăна
Çитнĕ шăпах пилĕк арăма.
Çитессе вăл çитнĕ те-ха,
Анђах арăмĕсем мĕн теççĕ-ха?
Авă, Тури-касри Хветура
Кунĕн-çĕрĕн вăрçаť Паттăра.

—Ђђорт!—тет вăл- -Шуйттан!
Сакăр уйăх пурăнтăм
Ыррине курман муртан.
Ађапала çыхăнтăм.

Ех, пĕђђен çеç пулнă пулсан!
Кам мана тиркĕђђĕ,
Мана кам илмĕђђĕ?
Тесе куђанаť вăл тарăксан.

Хветура мĕн-мĕн каласа вăрçнине
Çырса хут та çитерейĕс çук;
Ытти арăмĕсем те Паттăрне
Ăшă сăмахпа ырă суннийех çук.

Ăçтан ырă сунмалла!
Вĕсем те Паттăрпа пурăнса
Пĕрер ађаллă пулнă,
Ун пиркийех тата
Тăлăха йулнă,
Вăрçман çĕртен вăрçмалла!
Кун пек ĕçе ĕнтĕ хађ йалта та
Питĕ меллĕ тăваççĕ:
Çыраççĕ те параççĕ.

Ку ĕç те çапла суга çитет.
Вăт, Паттăра тинех лекет!
Ђаплă çурта Аслă сут пухăнђĕ.—
Малтан вăл арçынинђен,
Унтан арăмĕсенђен
Ыйтса тĕпђеме тытăнђĕ,
—Хуť тĕпђе, хуť ан тĕпђе,
Туп та пар алиментне!—
Теççĕ хайхи арăмсем пирĕн.
Ирĕксĕрех вĕсен хутне кĕрĕн!

Йăлтах шухăша йаҫĕ ку йапала,
Мĕн пулсан та ĕçе татса памалла.
Алиментне пысăк тăвас—
Арçыннине йăвăр килет,
Сахал парас—
Арăмсене сахал тивет.
Мĕн тăвас?
—Аҫасене ашшĕне парас!
Вĕсем унта тутă пулĕç,
Амăшĕсем тата тăвĕç!—
Тесе хуҫĕ сут вĕсене.
Ей! калаçтарҫĕ те ку ĕç çынсене!
—Тупрĕ Паттăр, теççĕ—пуйрĕ аҫаран!
Çук! Пĕрттех те тупайман!
Тепĕр кунне вăл килĕнҫен
Тухса тарҫĕ кайри хапхинҫен.
Çак ĕçе халăх хаҫ те пулин манаймасť.
Çавăнтанпа ĕнтĕ ку йалта
Хуť те мĕнле паттăр та
Нумай авланма хăйаймасť.

## ТАВĂРУ.

Шăшисем, темме, хуçине çиленнĕ.
Çилĕпе вĕсем ăна тавăрма тăнă;
Çак пысăк ĕç пирки сăмах татма
Шăшисем пуху тунă.
Пĕлтерўне вăхăтĕнҫе йанăран-и,
Йе кун йĕркинҫе пысăк ыйту тăнăран-и,
Пухăва харăсах пухăнҫĕç.
Пўлме айĕнҫен, лаçран, ампартан,
Нўхрепрен те пыҫĕç.

Анкартисенђен анђах йару çук:
Хыпар çитеймен пулмалла (пĕлме çук).
Уçрĕç пухуне
Сăмах пађĕç пуçлăхне,
Ну сăмахçă нумайђђен каларĕ,
Унтан тавлашу карĕ.
— Тавăрмалла! Тавăрмалла! теççĕ.
Анђах мĕнпе тавăрмаллине пĕлмеççĕ;
Пĕри—пўлме шăтармалла, тет.
Тепри—михĕ кăшламалла, тет.
Тата хăшĕ пўрте кĕрсе сăтăр тумалла, теççĕ.
Тем те, тем те калаççĕ!
Çав хушăрах хăла шăши тăђĕ те (паттăртараххи пулас)
Уçă сассипе пухăва лапах ђарђĕ,
— Йулташсем! тет (итлеççĕ).
— Епир капла кунĕпе шавласан та йĕркене кĕрес çук.
Хуçана тавăрма та пултарайас çук;
Ман шухăшпа ку ĕçе пирĕн çапла тумалла:
Хуçана тавăрма пĕрне анђах хушмалла!
Есир мана шансассăн
Еп ку ĕçе тăвăттăм.
— Шанатпăр! Шанатпăр! тесе
Кăшкăраççĕ ыттисем.
Ку паттăра ђанахах та шанђĕç,
Ĕçне тума срук вунă кун пађĕç,
Вунă кун иртейри, иртеймери—
Шăшисем каллах пухăнђĕç,
Хăла шаши шутланине
Итлеме тытăнђĕç.
— Епĕ, йулташсем, хамăр хуçан
Тĕпсакайĕнђи тĕп мулне тупрăм,
Вара пуйанăн кив укçисене

Веçех вакласа çăнăх турăм, тет хăла шăши.
— Ей, терĕ пĕри пухуран,
— Патша укçисем хаҫ çӳремеççĕ вĕт!
— Çӳреймĕçин,
Пурĕ пĕрех уласа макăрҫĕ!
Терĕ ăна хирĕç хăла шăши.

## ШĂНАПАЛА ПЫЛ ХУРҪĔ.

Пыл хурҫĕ пĕрре пӳрте кĕнĕ,
    Ха! тет шăна ун çине пăхса.
Йăлтах пирĕнни пек сăнĕ,
Шăнан пекех куçĕсем,
Авă тата еппин урисем.
Пирĕнни пекех сăнни пур,
Мĕншĕн ҫапа тухнă-ха вăл мур!
„Пыл хурҫĕ те пыл хурҫĕ" теççĕ,
Вĕсен усăллă ĕçĕсенҫен тĕлĕнеççĕ;
Мухтамаллăх çук,
Еп те тытăнсан, ĕçре унтан йулас çук.
Анҫах санран тытăнасси пулас çук:
Шăна тени йанттине йуратать;
Тата çакна калас пулать:
Ĕç тенине пурте ĕçлеççĕ,
Пĕрлешсе ĕçлеме нумайăшĕ пĕлмеççĕ,
Пĕрлешӳллĕ ĕçпе
Епĕр тĕнҫене тĕлĕнтеретпĕр,
Пирĕн пĕк пĕрлешсе ĕçлеме
Сире те ҫĕнетпĕр.
Ку сăмахсем такамшăн та усăллă пулмалла:
Етем те, пĕрлешсен, ĕçне ăрăснах кал-кал тумалла.

# СУРĂХСЕМ.

Шăши шăтăкĕнђен хĕвел ăшшине тухнă,
Ăна кĕтўри хура сурăх курах кайнă
— Ей, ађасем! Шăши, шăши!
Тет хура сурăх.
— Хўри çине пус, ан кăшкăр урăх,
Тесе ђупаççĕ ун патне илтнисем.
Хура сурăх шăшийе ĕçерсе йамарĕ...
Акă кĕтў пăлхана пуçларĕ,
Мĕн пулнă та мĕн пулнă? тесе, ыттисем
Хура сурăх патне ђупаççĕ,
Ăна хуптăрласа илђĕç.
Тĕрткелеççĕ, пĕр-пĕрне ђышаççĕ.
— Ан тĕртĕр пит, шăшийе тартаттăр!
Тесе тилмĕрет хура сурăх.
— Пуçах касаканни-им вăл? терĕ пĕри.
— Вара çакă ĕнтĕ пире хăмăл çитерекенни,
Терĕ уна пĕр ватă сурăх.
Апла пулсан хĕне ăна, теççĕ сурăхсем.
Анђах хĕнеме хăйу çитеймест хăйсен:
Пĕри те—есĕ хĕне, тет.
Тепри те—есĕ хĕне, тет.
Пуçлаканни пĕри çук.
Çав хушăрах катапа тилĕ пырађђĕ.
Вăл сурăхсене курђĕ те
Вĕсен патне пыђĕ
(Хир кайăкĕ хир кайăк хутне кĕрес терĕ куран)
— Тăхлађăсем!—тет тилĕ,—
— Хут мĕнле ĕçе те пĕлсе тусан аван,
Çак, есĕр тытнă шăши пит хайар йапала,
Унăр шăлĕсем те питĕ çивĕђ пулмалла,

Ăна ан çапса пăрахăр!
Авă улăмпа çеç пусарăр!
Сурăхсен телейн, çывăхрах улăм купи пулҫĕ,
Ăна ҫи пирвай мăклă така курҫĕ;
— Ей, аҫасем, ав улăм, йăтăр, терĕ вăл.
Лешсем шăши çине улăма тултара пуçларĕç.
Хăшĕ пĕри хупарса та таптарĕç.
— Ну çитĕ, вилсе кайĕ тата,
Ҫимĕрха уçса пăхар!
Терĕ мăклă така,
Уçса пăхаççĕ—шăши çук,
Шăршласа пăхаççĕ—шăрши пур,
Лешĕ шăтăкне çеç тарнă мур.

## МĂКЛА ТАКАПА КАҪАКА.

Каҫака çерем çине тухнă
(Уткаласа çӳреме пулас:
Вăл ун пек ĕçе питех те хавас).
Унта мăкла така та пулнă;
Ку, пысăкăскер, айакранах курăнҫĕ
Те çак такана курса,
Те хăйĕн çавăн пек йăла пулса,
Каҫака йакалма тытăнҫĕ:
Вăйпала çине-пуçне ҫĕтретет,
Хĕрлĕ тăмпа тутисене хĕретет,
Çерем çине выртса йăванаť,—
Тем те, тем те айланаť...
Мĕн тăван? Ама ҫун мари...
Йакалса çитейри, çитеймери
(Каҫака çав, çитрех пулмалла).
Пирĕн вĕçкĕн утрĕ вара малалла:

Пырсан, пырсан çепĕçĕн тутине шăлат,
Хăй йерипен така йенелле шăват,
Ун умне çитрĕ те—Ах Мирун Иванђ, есĕ мари?
Терĕ кађака.
—Епĕ, епĕ! тет мăн така.
Çак тантăшсем ĕнтĕ калаçу тапратрĕç,
Кађаки йепкеленет, кулкалат.
Иванђђи ун çине пăхса савăнат,
Кайран пĕрле пурăнмах шут тытрĕç,
Пурнăçра пĕр-пĕрне пулăшма сăмах пађĕç.
Çыран хĕрне вырăн йышăнђĕç—пурăнаççĕ...
Çанталăк ăшă
Çўлте кайăксем йурлаççĕ,
Ура айĕнђех симĕс курăк йешерет, шыв та пур.
Çырма кукри инçе те мар курăнат,
Шухăшласан—çакă хирте телейли
Мăкла такапа кађака çеç пек туйăнат.
Анђах
Тепĕр ђух
Шухăшпа епĕр улталанатпăр:
Телей çук çĕртрех
Епĕр телей куратпăр.
Пирĕн така хĕрттерсе ĕçлет—
Кунĕ кунĕпе кађака ваљђи курăк çĕклет.
Ларса канма та вăхăт çук
Леш кађакин хуйхи-суйхи пĕрттех çук:
Ир—сулхăнпа вăл уткаласа çўрет,
Хĕвел хăпарсан сулхăна кĕрет.
Ура айĕнђи курăка та
Хăй татса сийесшĕн мар;
Ђăн ђăваш кађђисем!
Çак йуптару йўппине есĕр туйрăри?

# КЎРШЁСЕМ.

Кўршёпе кўршён
Калаçмалли тупăнатех ёнтё.
Авă
Йарман арăмё Урине
Сарнă йанă урлă çăварне:
Сан упăшку çапла!
Сан упăшку капла!
Шуйтан! çёр çăташшё!
Çăва патне кайашшё!
Тесе вăрçаť вăл пётёмпе
Хăйён кўршё Тимук арăмне.
Çав ёнтё— хёрарăм вăрçма тапрансан,
Итлеме çеç ан ўркен.
Тимук арăм те калаçма тытăнсан
Сăмахсăр аптăраканнийех мар иккен:
Урине хирёç вăл
Виттерсе кăна пыраť сăмахпа.
Кассисем—Мён пулнă та, мён пулнă тесе
Шав шав çине ђупаççё урампа.
— Ара! Есёр мён йантратăр,
Терё тёлёнсе Никантăр.
— Ула йăттă мурăн Тимукё—шуйттанё
Ухатара çухатса килђё,
Тесе хуђё
Йарман арăмё—куштанё
— Ей! тупнă тата хайсем калаçмалли—терё йерипен
Кукăр Марукăн Михали.
— Тупнă çав, тет Урине: Тупнă,
Вăрçса калаçмаллинех тупнă,
Пётерђё йăтта... Ех йăттăмçăм!

Етем ăслăђђĕ вĕт, пассамçăм:
Урайне ађа искĕртсен
Çуласа—типĕтсех илеђђĕ,
Кипкесем те тасађђĕ...
Ех! йăттăм!..
— Урай, кипке тасатма
Йăттин ăсĕ çитнĕ те,
Хăйĕн çитеймен, тесе хуђĕ комсомол Кирилле,
Лешĕ уна итлерĕ те
Уттара пађĕ килелле.

## ТОКЛАТ.

— Итле-ха, пĕр сăмах калам сана,
Терĕ васкаса Иван Мируна
— Мĕн тата? Кала кала! терĕ леш
Мĕн каласси... манăн токлат тумалла...
— Есĕ! пĕлтĕм: сана алă çупмалла,
Çапла-и?—Çапла пулмасăр,
Есĕ пуçласа анђах йар!
Кайран... Кайран...
Аťа хăвăртрах!
Халăха кĕттерсе тăратас мар,
Терĕ токлат тăвакан
Çапла каласа кăсем
Ентĕ пухăвалла васкаççĕ,
Пухăвĕнђе çыннисем
Паçăртанпах кĕтсе тăраççĕ,
Çитрĕç... кайрах кайса
Мирунĕ вырăн йышăнђĕ
Çўлĕ вырăн çине тăрса
Иванĕ токлат тума тытăнђĕ,
Пĕр сехет калари ку, калаймари—

Вăл мĕн вăхăт калани пире кирлех мар,
Анђах Мирунĕпе тикĕс мар:
Вăл, мур ăйха кайнă.
Ăна Иванĕ те курђĕ пулас.
Токлат та пĕтсе килет, мĕн тăвас?
Ак хайхи Иван пăшăрханма пуçларĕ.
Хытăран хытă, хытăран хытă кала пуçларĕ.
Çук! хăйамат вăранмасť!
Токлат пĕтрĕ,
Ал çупасси çинђен пĕри те асăнмасť,
— Иий ăйхă ђăпти! Тăмана!!!
Тĕсе хуђĕ вара Иван Мируна.

## ИНКЕК.

Паљук арĕм Ухтине
Ђан пек уçă сассипе
— Тпрукађ тпрукађ, тенине
Ђасах илтрĕ хура ĕне.
Ĕни—муук, терĕ те
Пăлтăр умне çитрĕ те,
Шăлтăр-шăлтăр пăтти—патт
Ĕне кĕђĕ пăлтăра
Паљук пўртĕн алăкне
Аран уçса ĕлкĕрђĕ,
Атту пулсан хура ĕне
Мăйракипе тĕртеђђĕ.
Пўртри çамрăк пăрава
Хура ĕне „йаш" çулаť,
Унтан татах малалла
Лаххан патне çаврăнаť,
Паљук арăм Ухтине
Пĕђĕкеççĕ ђўлмекпе

Ĕне патне пыраҫҫĕ,—
Урай хăми „шарт“ турĕ.
— Мĕншĕн-ха ку? Пĕтрĕ пуç!
Палҫуу-к!!!
Курмастăн-им, ула куç!
Урай хăми хуçăлнă...
Çитрĕ пысăк ĕнене
Мекĕрленсе çĕклеме,
Палҫук тытрĕ пуçĕнҫен
Арăм тытрĕ хӳринҫен,
Çапах мĕскĕн хура ĕне
Анса карĕ сакайне.
Ĕнен кайри урисем
Иккĕшĕ те хуçăлҫĕç
Шалça çине ӳкнипе
Куçĕсем те хупăнҫĕç.
Найанланса, урайне
Йепепеле çĕртнĕшĕн,
Палҫук хăйĕн арăмне
Ҫышкипеле хĕнесшĕн.
Хура ĕне вилнишĕн
Сутне тума пире мар;
Анҫах çакна калăпăр:
Пӳртри шывлă лаххампа
Урай çĕртме кирлĕ мар!

## ТĔНĔЛ ПИРКИ.

Çĕпĕрук Ваҫккин аҫи ҫирленĕ—
Ĕнтĕ виç уйăх вырăнпах выртаť,
Арăмĕ йалти йумăççене çӳресе пĕтернĕ,
Халĕ Ваҫккине йута туртаť

— Ваӊкка! тет—Ваӊкка, мур-илешшӗ!
Аҕу вилес патне ҫитнӗҫке,
Илсе кайха ҫанта Лапаша!
Хӗрӗх ҫухрӑм анҕахҫке!
Лапашра пӗр ҕаплӑ йумӑҫ пулнӑ.
Ваӊкка ӑна пӗлсе те,
Унта каймасӑр тӑнӑ:
Ваӊкка йумӑҫа ӗненсех каймасӑ,
Анҕах, вӑл хӗрарӑм сӑмахӗнҕен тухаймасӑ,
— Ӗнер те Ваӊккӑ, мурлешшӗ,
Пайан та Ваӊкка, мурлешшӗ —
Кайам пӗреххут!
Терӗ ҕирлӗ аҕа ашшӗ.
Лашине кӳлҕӗ те, лартрӗ аҕине,
Килти ӗҫе пӑрахсах Ваӊкка тухрӗ ҫул ҫине.
Пыраӑ...
Ҫул такӑр, лаши те пӗр тӗрлӗ ҕупаӑ.
Пырсан, пырсан аҕи вӑрӑммӑн ахлатса йараӑ.
Ыратмаҫ-и тет? Ҕас ҫитӗпӗр—
—Микуҕ, Микуҕ! тет Ваӊкка.
Авӑ Кӗрме пулнитси курӑнаӑ,
Кӗрмерен Лапаша вӑтӑр ҫухрӑм ҫеҫ йулаӑ.
Аҕине ҫапла калаҫса Ваӊкка Кӗрмене ҫитрӗ.
Тӑвӗнҕен аннӑ ҕух лашине пуҫӗнҕен тытрӗ.
Те туран хытӑрах аннипе пулҕӗ
Ваӊкка урапин тӗнӗли лаштӑрах хуҫӑлҕӗ.
— Ха инкемек! Ҫул питӗрӗнҕӗ, вӗт.
Килнӗ-килнӗ тухтӑр патне кӗрем хут,
Тесе Ваӊкка
Йумӑҫ шухӑшне хӑварҕӗ:
Урапине шутарса
Пуҕнитса йенне уттарҕӗ.

Пуђнитсăра та ырри пулман пуђ çав тейĕçĕ.
Пирĕн ђăваш арăмсем.
Çук! пулман мар—ађа йăлтах ђĕрĕлђĕ,
Йумăç мар çав хађхи пирĕн тухтăрсем!

## ХĂНАСЕМ.

Ситти пиђђе кĕрхи кун çула пăхмасăр
Карђăкĕпе Шупашкара кайаť
Ма кайаççĕ-ши кăсем? тейĕр есĕр.
Ма пулаť-и? Вĕсен унта ађи вырăнта тăраť,
Пĕђĕк вырăнта та мар, аслинђех теççĕ,
Шупашкар çыннисем те пурте ăна пĕлеççĕ.
　　Ывăлĕпе кинне курма,
　　Пите питĕн тăрса калаçма
Васкаççĕ çакă пирĕн ват çынсем.
Çул тăрăх калаçса çеç пыраççĕ хăйсем.
　　— Ху ывăнтăм
Шупашкара çитсен канăттăмăрђђĕ,
Тет йерипен старикĕ.
— Канма мар, тет туйа тытнă карђăкĕ,
Çитесси туђккă, унта
Ашĕ-пашĕ, çăмарти—пурте хамăрта,
Çапла калаçса çак хăнасем
Шупашкара çывхарса пыраççĕ,
　　Ывăннипе мĕскĕнсем
　　Тайкаланса çеç утаççĕ.
Çапах та хăйсем
Хулана йерипе çитсе кĕђĕç.
Ывăлĕн хваттерне тупса
Алăкĕ патне пырса тăђĕç;
— Прахвур! Прахвур!
Тет Ситти пиђђе карђăкĕ.

— Ђим! Ан кăшкăр-ха, мур,
Тесе тилмерет ăна хирĕç старикĕ
— Хулара кунта йĕркеллĕрех пулмалла
Ав! Шăнкравне çеç туртмалла.
Шăнкрав сассине илтсе-и
Йе тулти сасса сиссе-и
Шалтан пĕр çепĕç майра васкаса тухаť,
Хăй тинкерсе ват çынсем çине пăхаť.
Сăмахне те калаť те
Вырăсла ђĕлхепе ăнланмалла мар.
—Кинĕ-и ха ку? Нађар куçпа палламалла мар,
Тесе пăхаť
Ситти пиђђе карђăкĕ ун çине.
Майра кинĕн сăмахĕ
Пĕрттех ăшшăн туйăнмасť хăйсене.
Вĕсен умĕнђе вăл
Нумайах калаçса тăмарĕ
Алăкне хупрĕ те, кĕрсе çеç карĕ.
—Аťăр! Килĕрех, тесе
Ђĕннĕ сăмах та пулмарĕ.
—Камантир, камантир терĕ, тет
Ситти пиђђе карђăкĕ
— Елле, Прахвур комантире тухнă-ши?
Çук тухман, тет ăна хирĕç старикĕ
—Комантировкка çеç кайнă, тет,
—Хăçан килет-ши?—Кам пĕлет!
Хырăм выçрĕ пит, кăлархха çăкăрне,
Ларса канар-ха, пит ывăнтăм,
Тет старик. Вĕсем унта ларнине
Еп хам та иртсе кайнă ђух куртăм.

## ЁÇ ÇИНЂЕХИ ИРÇИНЂЕ.

Карт-каррт! Каррт-каррт!
Аватаť пĕр карăш,
Улăх тăрăх ун сасси
Ђўхенет пĕр харăс.
Ех, савăк!
Улăхра илем,
Ĕçлет хура халăх
Иртенпе-каçђен.
Хĕвел, кармашаť çўле
Сăмсине кăтартрĕ—
Тăвайкки тăрĕнђе.
Кăђăн-кăђăн, кăђăнн-кăђăнн!
Йантăраť çава,
Шўлкемеллĕ инке арăм
Ĕçлет ман çумра.
Ман ал
Пыраť сулăнса,
Ей, тал,
Хупах, ывтăнса!
Ђăвăшшт! Ђăвăшшт!
Варкăшаç сассем
Хĕресђен вăл—паттăр!
Ывăнми етем.
Ех, тар
Шăвăнаť питре.
Хастар
Тăмас шăл йĕрсе.
Пĕт-пĕлтик! Пĕт-пĕлтик!
Путене сасси,
Улăх тăрăх, ун çемми—
Ман умри ђасси.

Натли,
Апатпа килет,
Алли —
Ик ђĕрес çĕклет...
Ман йăмăк—Аӊук
Çитрĕ апатпа,
Вырт, кан,
Алри лапатка!
Йашка —
Ларат пăсланса
— Ваӊкка!
Кил-ха апата.
— Спаççипă... вăл калат пире
Хăй тек, хырат çĕр çӳçне.
Кăђăн-кăђăнн! кăђăнн-кăђăнн!
Йантăрат çава,
Шӳлкемеллĕ инке арăм
Ђуптутарат çавине
Симĕс тумлă, капăрланнă
Аслă улăх курăкне!

## КĔТӲÇ ЙУРРИ.

(Хумма Хĕлипне).

Иртнĕ пурнăç йӳç кăшман,
Ђут пĕтеђђĕ пуçăм ман.
Ех-хай!
Йал куштанĕ умăнђе
Епĕ тăнă ђĕтресе.
Ех-хай!
Çиме çуккă, Микулай—
Сăптăрађђĕ куланай.
Ех-хай!

Пурнăç ђухăн пулнăран,
Кĕтӳç пултăм ултtăра.
Ех-хай!
Сивĕ, çиллĕ кунсенђе...
Еп çӳреттĕм ислеnсе.
Ех-хай!
Халĕ пурнăç хамăн рай
Тек хаљ çуккă Микулай.
Ех-хаљ!
Совет влаçĕ ырлăхпе
Халĕ кĕтĕм вĕренме.
Ех-хаљ!
ЛЕНИН панă ăс-тăна
Пуçтаратăп хам пуçа.
Ух-хаљ!
Çунтăр, пĕттĕр пуп турри,
Тек еп пулмăп ун хурри.
Еп-хаљ!
Халĕ епĕ çĕнĕлле—
Ленин сăнĕ ђĕрере.
Ех-хаљ!

## САВĂТРА.

(Старевăри кĕленђе савăтĕнђе 1922-мĕш çулта ĕçлесе курнинђен).

Ак савăт, ун ăшĕ
Йăлт сĕрĕм, вĕри,
Мăнтарăн рапођђин
Ђăтатĭ кам ђĕри!
Шавлаççĕ, кĕрлеççĕ
Тем тĕрлĕ машшин,

Мĕне кунта кирлĕ—
Йалти кăраççин?
Çап-çутă, хĕвел пек
Тăрат ирĕлсе,
Шур хăйăр пулат тек
Таса кĕленҫе,
Ĕçлет ĕçĕн тусĕ
Рапоҫҫи тени,
Хĕлхемлĕ, хĕрўллĕ
Ун хурăç ҫĕри.
Ак турĕ, минутлă
Кĕске вăхăтра,
Улт-çиҫĕ путтылккă
Вĕрсе пур вăйпа.
Вĕри! ҫăтма çуккă,
Тек тарĕ йухат,
Рапоҫҫи хастарлă
Вăл уншăн хыпмаст.
Йарат хăйне тăрăх
Пăрланнă шыва,
Кулаймăн, тек шăрăх
Вăл çĕнҫĕ сана!
Каллех вăл пуçларĕ
Хĕрўллĕ ĕçе,
Выљат трупкă вĕçĕ
Çап сутă хĕмпе.
Шăп ултçĕр рапоҫҫи
Ĕçлеççĕ хастар,
Çитменлĕх пулсассăн
Тăраççĕ пĕр кар!
Рапоҫҫи вăй-халĕ
Пит çирĕп,—хĕрў,

Хастарлă ĕçлеççĕ,
Илтеймĕн йĕрӳ.
Пулаť комунисăм
Рапођђи пĕрле,
Кам конттăр,—пăђлантăр,
Вăл çӳпĕ пире!

## ПЕЂЂАТНӖК.

(„Ђăваш Кĕнеки“ типокрафинђи ватă рапођђине
Павăл Петровђа).

Кĕнеке лаççинђе ĕç хĕрӳллĕ
Сывлăха вăл ĕмет пĕрех май;
«Шурă ал» ку ĕçрен тарĕ тӳртĕн—
Ĕç çумĕнђе ђĕтрекен кирлĕ мар!
Пиђетре ĕçлекен хĕрлĕ паттăр
Çакăн пек калаçаť ман умра,
Харам пыр çынсене йуратмасăр
Йатлаçаť вĕсене тарăхса.
Ун çинђен хăрăм пек кимнаçťорккă
Хĕрĕх çул ĕçлесе хывăнман,
Çавăнпа калаçаť вăл хастарлă
Ун ђĕри машшинпа пĕр тăван.
Ĕçпеле кĕрешет вăл хĕрӳллĕ
Пур вăйран тăрмашаť машшинпа,
Умĕнђе выђанаť хурăç таллĕр*)
Кĕç тухаť кĕнеке çуралса.
Ӳпкене кăшлакан „ђинк“ тусанĕ
Çӳпĕ çеç, паттăра çĕнес çук,
Машшинсем хулхара шавланийĕ
Ним те мар, уншăн вăл—çывăх тус!

*) Таллĕр — кĕнеке валли хатĕрленĕ саспаллисене машшин çине майлаштарса лартмалли вырăн.

Таллёрта шпонёсем*) пăсăлсассăн
Кĕç йусаť вĕсене çĕнĕлле,
Ун ђĕри ђăн-ђăнах вут-кăварлă
Ђĕререн йуратаť вăл ĕçе!
Хĕрĕх çул пиђетре вăл ĕçленĕ
Халĕ те тăрăшаť унпала,
Кĕнеке тимĕрçне кĕвĕлетĕп
Çак сăвва,—ун ĕçне йуратса.

* * *

Хĕрӳ ĕç вăйĕпе хĕпĕртерĕм:
Йантăра ĕç йурри ман умра
Ей, вăй-хал, сывăи, есĕ! терĕм
Епĕ те ĕçлекен çакăнта.
Вăй, вĕре ман умра вут-хĕлхемлĕ
Çиçĕм пек есĕ çиç ђĕрере!
Павăл пек хĕрĕх çул кĕрешесђĕ
Манăн та ырă ĕç пиђетре!

## ТĂВАН ЙАЛТА.

Пурнăç ђухăн пулнă майĕ
Тухрăм карăм ĕçлеме,
Акă халĕ вăхăт çитрĕ
Тавăрнатăп килелле.
Акă манăн савнă йалăм
Симĕс, тикĕс улăхра,
Ха! хастарлă, капăрланнă
Çĕнĕ кĕмĕл тумпала.
Ђупрĕ тухрĕ улăх урлă
Савăк сасă йалăмран,

---

*) Шпон—ĕç хатĕр йађĕ.

Пĕр маттурĕ купăс ђăснă
Сас ђӳхенђĕ йанн! та йанн!
Ех çĕнйалăм, савнă йалăм!
Сана саврăм ђĕререн,
Халĕ есĕ, хастарланнă
Тумна тунă çĕнĕрен.
Кивĕ пурнăç çĕрђĕ,—пĕттĕр!
Ђухăн тухрĕ пусмăртан,
Халĕ халăх асăнмаллăх,
Шкул та лартнă мĕн таран!
Манăн пурнăç, пулнă пăрнăç
Ђăтнă мăшкăл хĕнхура:
Йал пуйанĕ, йе усламăç
Тек кулађђĕ ман умра.
Шутламанђђĕ епĕ ĕлĕк
Çакă пурнăç пуласса,
—„Саплăк тусĕ... çĕтĕк кĕрĕк...“
Тек кулађђĕç хурласа.
Вăхăт çитрĕ, мăшкăл çĕрђĕ—
Çунтăр, пĕттĕр, тĕппипех!
Савнă йалăм та çĕнелнĕ—
Ленин сăнĕ пӳртсенђе.

## ЙУЛАШКИ КАÇ.

Пĕлĕтри шантала çутса йанă—
Çĕр çинђе пĕтĕмпех çĕн илем,
Хĕвел çук. Вăл канма анса ларнă:
Тосорта уйăхпа çăлтăрсем.
Тахтамет*) çыннисем тĕлĕреççĕ
Вилнĕ пек ним пĕлми ыйăхра,

---

*) Тахтамет—ђăваш йалĕ

Такамсем тарăхсах хĕсĕрлеççĕ
  Çил йĕрет ађа пек йăнăшса.
Ман умра ђӳхенет Тарттас**) шывĕ
  Леш йенђе ал çупаŤ хурама,
Çĕпĕрте пуласса тек кĕтеттĕм
  Çитрĕм тин унпала паллашма.
Акă вăл! Аранах ăна куртăм
  Акă вăл Çĕпĕрти ђăвашсем!
Йал çине тепĕр хут пăхса тухрăм
  Тусăм пăх! пĕтĕмпех çĕн илем.
Çуртсене çеремпе витнĕ майĕ
  Çĕрелле пĕрĕхеç тусансем,
Тутарсен авалхи, тус—мéђђеђĕ
  Çилпеле шăхăраŤ пит киђем.
Шăпăртах Тахтамет. Вăл тĕлленнĕ,
  ÇывăраŤ ним пĕлми ыйхăра—
Вăхăтпа кăна çеç ђӳхенеççĕ
  Кашкăрсен сассисем вăрманта.
...Кĕçĕр каç тусăмпа уйăрлатăп,
  Шухăш ман туртăнаŤ килелле
Аллине, савнăран, ђăмăртатăп...
  Кĕçĕр çеç манпала Тахтамет!
Пĕлĕтре шантал пек çутă уйăх
  Сирпĕтет çуттине çĕрелле,
Айакра макăраŤ путек-сурăх
  Тем калаŤ пикенсех вăл пире.
Кĕçĕр çеç тусăмпа калаçатăп
  Ыран ир вăл йулаŤ уйăрлса,
Аллине, савнăран, ђăмăртатăп
  Вăл тăраŤ çĕрелле пуç усса.

---

*) Тарттас—йухакан шыв

Сывă пул савнă тус çамрăк Таҫă
Ан йатла пăрахса кайнăран,
Çырусем йаланах йарса тăрăп
Ун пирки, тусăм ес ан хăра...

## ОКТĂПЕР КĔВВИ.

Ой тĕнҫе! ҫасрах калаҫҫĕ
Хăçан йусанĕ çипуçу?
Пайтах ĕççынĕ хуйăх виттĕр
Иртерҫĕ саншăн çапăçу!
Пуйан тавраше тăранмасăр
Хыпса çăтасшăн ҫухăна,
Тĕнҫе куштан,—вăл халĕ урнă
Пайтах асаплăх ун тавра.
Йĕрет Китайăн çĕрĕ-шывĕ
Виле капланнă пинĕ-пин,
Çĕршер, пиншерĕн çын пустарҫĕ
Пуршуй меçникĕ Ҫшан-Тсо-Лин!
Кулак, кулак! Кулак вăл—кашкăр
Йалан пурнасшăн çын вăйпе,
Ес вил халех. Хуť йăнăш — макăр —
Кăшлаť хайаррăн пурпĕрех!
Тĕнҫе! Тĕнҫе! Мĕнҫул асаплăх —
Йĕреç пиншерĕн тăлăхсем.
Хăçан вăл пулĕ Комунисăм,
Ĕçлес комуншăн пикенсех!
Тĕнҫе каллех йунпа хĕрелĕ
Пулас вут-хĕмлĕ вăрçăра,
Кулак! пире унҫух мĕн тейĕ, —
Вăл выртĕ, çĕрĕ шăтăкра.
Епир нумайăн, епир мĕлйунлă
Кулакшăн çуккă каçару,

Пусас ăна! ђĕри аркантăр...
Çĕнтерĕпĕр çапăçура!
Çитет текех, пайтах кăшланă
Епир асаплăх тĕввине,
Епир йĕрсе—кулак ташланă
Пайтах вăй кўпнĕ пирĕнне!
Пайан праçник, пайан Октапĕр
Совет Раççейĕ çĕнĕлле,
Совет тултарђĕ пайан вунпĕр
Кунçул Раççейăн çĕнĕлле.
Акăлђан пуршуйĕ шăл хăйратăр
Епир пухатпăр вăйсене,
Пуçласшăн вăрçă. Хăратаймăр!
Мĕнпур ĕçхалăх пирĕнпе.
Пирти Октапĕр револютси
Аркатрĕ, пусрĕ пуршуйа,
Кун килĕ. Ђĕтрĕ пан Пилсутски
Октапĕр çиçĕ Польшăра.
Мĕнпур ĕçхалăх пĕр ђĕреллĕ
Пуршуй тĕнђийĕ пĕтмеллех!
Пирте вĕрет комун емелĕ
Комунă йулĕ ĕмĕрех!

## ЛЕНИНЛА ПИЛЕТ.

Еп хресђен ађи,
Ман савни уй-хир,
Асаплăх сăнни
Тивнĕ мана ир.
Ђухăнлăхра ўснĕ,
Кивĕ, хура пўртре
Микулай сăннийĕ
Халь те ђĕрере.

Кантур пек лараççĕ
Пуйан пӳрҫĕсем;
Пирĕн пӳртре,—ташлаҫҫĕç
Тĕтĕм сĕрĕмсем.
Пуйансен çĕршывĕ—
Ҫи лайăх ана..
Ахăрса лараççĕ
Ĕçкĕсем тусан.
Ĕненнĕ, пуç çапнă
Епĕ те турра,
Çулталăкра тытнă
Иккĕ ураса.
Анҫах улталаннă,
Еп пулнă айван,
Йулташсем вăраннă
Тăрас ыйăхран!
Йулташсем ăс паҫĕç
Комсомол пулма,
Нумай ăнлантарҫĕç
Айвана мана.
Хастарлантăм, пултăм
Епĕ комсомол,
Хĕрлĕ йалав тытрăм,
Айванлăх, тĕп пул!
Çитĕ сана, мăшкăл!
Ултавлă хĕрес,
Авкалатăп—хуçăл
Сана пĕтерес!
Шаккăп та еп туптăп
Хамăн ăс-пуça,
Хастарланса утăп
Çĕнĕ çулпала.

Еп хресђен ађи,
Ман савни Совет,
Ылттăнран хакли—
Ленинла пилет!

## МĔНШĔН КУЉЂАНАС?

Йуратрĕ те саврĕ
Ман çамрăк ђĕре,
Илемлĕ манерлĕ
Пĕр çамрăк хĕре.
Ех, тусăм, йуратрăм
Ђунтан еп сана!
Анђах ес тем калăн?
Терĕм еп вара.
Нумайђђен вăл тăђĕ
Аллине сулса,
Комсомол ес... терĕ
Кăмăла хуçса.
— Комунис çав есĕ,
Комсомол та, тет,
Турра та вит есĕ
Ĕненместĕн.. тет.
Нумайђђен вăл пурăнђĕ
Туртăнкаласа,
Ун пирки ман шутăм
Тăђĕ выљанса.
Ăнлантартăм вирлĕ
Совет саккунне,
Пурăнма тетĕп,—кирлĕ
Пире çĕнĕлле.
Комунис вăл—пирĕн
Ђи аван йулташ,

Сӑмахпа, ӗҫпе те
Ӑс патӑм ӑна.
Ак хайхи ман тусӑм
Карӗ ҫавӑрнса!
Ей, тусӑм, саватӑп
Санах епӗ тет,
Ӗмӗр иртеретӗп
Санпалах еп тет.
Халӗ хуйӑх ҫуккӑ,
Ҫавӑртӑм ӑна,
Лайӑх комсомолккӑ
Пулђӗ Урина!
Халӗ ӗнтӗ, тусӑм,
Мӗншӗн куљђанас?
Савнийӗм, йулташӑм,
Пӗрлех пурӑнас!

## ЂӐВАШ ХӖРӖСЕНЕ.

Комунисӑм ҫулӗ
Вӑйлансах пырать,
Ултавлӑ мул вӑйӗ
Путлансах ларать!
Тӗттӗмлӗх патшийӗ
Ӱкрӗ такӑнса,
Ун вырӑнне ҫуралђӗ
Ҫӗнӗ самана.
Хӑҫанђђен пурнаттӑр
Есӗр тӗттӗмре?
Вӑхӑт ҫитнӗ, тӑрӑр!
Утӑр вӗренме.
Куљттурӑ ђаршавӗ
Уҫӑлнӑ ђухне,

Вăхăт, ђăваш хĕрĕ,
Сана вăранма!
Авал нумай тўспĕ
Хĕн-хур вырăнне,
Сирĕншĕн хаљ çитрĕ
Ырлăх çĕр çинђе.
Пуç варне тултарăр
Ăслăлăх мулне.
Хастарланса утăр
Ленин çулĕпе.
Куљттурă хунарĕ
Йăлкăшсах çунаť,
Йашне те, хĕрне те
Ыр пурнăç сунаť.
Хăçанђђен пурнаттăр
Есĕр тĕттĕмре?
Вăхăт çитнĕ, тăрăр!
Утăр вĕренме.

1925 ç.

## ШАНЂĂК.

Акă вăйлăланĕ
Ђăваш ĕççынни,
Ун умĕнђен çухалĕ
Асаплăх сăнни.
Тĕттĕмлĕх тĕп пулĕ,
Вăхăт путланма!
Тинех вăхăт çитĕ
Савăнса пурăнма.
Çитĕ халĕ вăхăт
Пуçа усас мар,

Тĕттĕмрех пурăнма тек
Ђăваш вылђăх мар!
Пăђланнă уй-хирĕ
Пулĕ çĕнĕлле,
Тыррийĕ те ÿсĕ
Тутă, сĕрĕшсе.
Хĕрарăмсем калĕç —
Пурнăпăр! тесе
Ăслăланса çитĕç
Вĕсем вĕренсе.
Айванлăх, кахаллăх
Пулмĕ ун ђухне,
Тирпейлĕх, тасаллăх
Пулĕ килсенђе.
Йумăçсен йăлийĕ
Путланĕ тĕппе,
Сухăр вĕлтрен шăтĕ
Тăприйĕ çине.
Пушкĕн пек хĕрÿллĕ
Пулĕç сăвăçсем,
Шăтса тухăç халĕ
Ÿсĕç çамрăксем.
Туртĕçĕ те ђăсĕç
Илем кĕввине,
Йантраттарса йурлĕç
Ђăваш йуррине.
Çитĕ халĕ вăхăт
Пуçа усас мар,
Тĕттĕмрех пурăнма тек
Ђăваш вылђăх мар!

# ТĔШМĔШ УНИÇÇЕ.

Тĕшмĕш арăм Униççенĕн
Аҫине,
Темскер пулҫĕ, вĕрилен҈ĕ
Каçхине.
Хутте тĕтĕр,—шăтăк-шатăк
Кăмпапа,
Шутламасҭ те пĕҫĕк Пеҭок
Сывалма!
— Киремет ав тытрĕ пулĕ,
Хăйамат!
Йумăç патне каймаллаҫҫĕ,
Винават.
Кăтăрт-катăрт хыçкаласа
Кĕççине,
Тухрĕ ҫупрĕ йумăç патне
Униççе!
Пеҭук йулҫĕ тапкаланса
Сăпкара,
Алса тул пек ҫăмлак унăн
Çăварта...
Суккăр йумăç хайхи çакă
Арăма,
Сывалаҭ, тет, аҫу санăн,
Ан хăра:
Анҫах парăн мана ĕçшĕн
Пĕр кĕпе,
Сывататăп... ĕçтер тулĕк
Çуттине.
Мăн тухатмăш ҫирлеттернĕ,
Савнă кин,

Сан ҫине вӑл пит ҫилленнӗ
Илтрӗни?
Тимле, киннӗм, еп ыйтатӑп
Нумай мар,
Унсӑр сана тӑшман тӑвӗ
Пысӑк шар.
— Хӗрхенместӗп, — ес ыйтнине
Нимӗн те,
Хывса паҫҫӗ ҫӗн кӗпинех
Униҫҫе!
Акӑ сана ҫутти ӗҫме—
Тыт укҫа,
Тархаслатӑп, ҫӑмӑллат ес
Пурнӑҫа.
Куҫҫулӗсем йухса аннӑ
Униҫҫен,
Тухатмӑшран пит хӑранӑ,
Амӑтке!
Хайхи йумӑҫ хӗпӗртерӗ
Шутсӑрах,
Темскер те пӗр тума хушрӗ
Ха-ха-хах!
Масар ҫинҫен тӑпра кайса
Илмелле,
Ку тӑпрана кӑрше тӑкма
Пӗлмелле...
Вӗрҫӗ-сурҫӗ хайхи йумӑҫ
Васкаса,
Ҫур путылккӑ ҫут тулаҫҫӗ
Ҫурҫӑкпа!
— Ну, халҫ ӗҫ ес ҫакна, савнӑ
Хаклӑ кин,

Тухатмăшран ес тасалтăн
  Халĕ тин.
Сурӑăклă шыв ĕçнĕ хыççăн
  Васкаса
Тухса вĕçрĕ пирĕн матка
  Килелле!
Сăмсасене шăлкаласа
  Ӑак-ӑак ӑак,
Персе çитрĕ хайхи матка
  Киле ак!
Йумăç хушнă ĕçсене вăл
  Васкаса,
Туса хуӑĕ тĕппипелех
  Талăкра.
Вăхăт шăвать, майĕпелех
  Йерипе,
Лайăх пурнăç кĕтет текех
  Униççе.
Самай лайăх пурнăç кĕтнĕ
  Вăхăтра,
Хай Петокка унăн вилӑĕ
  Апăрша!
Хуйхă тулӑĕ кĕтӳпелех
  Хай маткан,
Хăй те карĕ ӑирлесех ав
  Ăнсăртран!
Ăш ыратать,—те пырăшсем
  Кивĕрен?
Те,—хай йумăç сурӑăккине
  Ĕçнĕренӗ!
Пуçа усрĕ хай шеремет
  Униççе,

Ик-виç çăпан шăтса тухрĕç
Пĕççине!
Тĕнки-тенкки, тĕнкĕл-тенкĕл
Ђан çапсах,
Пытарттарђĕ хай ађана
Шăтăка.
Ађа райа кайтăр тесе,
Пађăшка
Пађĕ каллех асăнтарма
Пĕр кăркка!
Кунсăр пуçне тур йађĕпе
Ђиркӳве,
Кайсах пађĕ виçĕ тенкĕ
Укçине...
Йумăçа та, пађăшка та
Савнăран,
Йакалаççĕ, пăђланаççĕ
Пи-ит ава-ан!

## КĔРНЕКЛĔ.

Вăйлăланђĕ ерех сутти
кĕрнеклĕ,
Ытла лайăх унăн тути
йĕркеллĕ.
Сăмакунне вилĕм çитрĕ
кĕрнеклĕ,
„Вырăс йӳççин“ ĕмри килђĕ
йĕркеллĕ.
Пађăшки те, тийаккăђ те
кĕрнеклĕ,
Ĕçет ăна елхери те
йĕркеллĕ.

Ахаҫ ҫухне паҫăшкăсем
  кĕрнеклĕ,
Ытла ҫипер пуплешеҫҫĕ
  йĕркеллĕ.
Ҫав вăхăтрах ҫутти ĕҫсен
  кĕрнеклĕ,
Сиккелеҫҫĕ арҫурилле
  йĕркеллĕ!
Йаш-кĕрĕмсем ун уссипе
  кĕрнеклĕ,
Харкашаҫҫĕ пĕр-пĕринпе
  йĕркеллĕ.
Ҫутти ĕҫсен хĕрĕсем те
  кĕрнеклĕ,
Ытла ҫипер пуплешеҫҫĕ
  йĕркеллĕ.
Тепĕрисем астумасăр
  кĕрнеклĕ,
Пĕҫик папак туйанаҫҫĕ
  йĕркеллĕ!
Хăш пĕрисем ун кăмăлне
  кĕрнеклĕ,
Автансем пек сиккелеҫҫĕ
  йĕркеллĕ.
Ҫак вăхăтрах тепĕрисем
  кĕрнеклĕ,
Ҫĕҫĕпелех ҫиккелеҫҫĕ
  йĕркеллĕ.
Пуйан ҫынсем ун уссипе
  кĕрнеклĕ,
Мухтанаҫҫĕ мулĕсемпе
  йĕркеллĕ.

Ђухăнсем те ăна ĕçсен
кĕрнеклĕ,
Ђистах вара пуйса каççĕ
йĕркеллĕ.
Йалсоветсем ун уссипе
кĕрнеклĕ,
Йăлт тӳнтерле ĕç тăваççĕ
йĕркеллĕ.
Çутти тутлă, шутсăр ырă
кĕрнеклĕ,
Уншăн пĕтет темђул тырă
йĕркеллĕ!
Хăшпĕрисем ун кăмăлне
кĕрнеклĕ,
Сутса ĕçес çурђĕсене
йĕркеллĕ.
Йĕмсене те сутса ĕçсен
кĕрнеклĕ,
Кайран çӳрес çапкаланса
йĕркеллĕ!
Урса çитсен ӳссĕрпеле
кĕрнеклĕ,
Тăванне те типĕтеççĕ
йĕркеллĕ.
Кун пек ђаплă ĕçсем пирки
кĕрнеклĕ,
Текех сута турткалаççĕ
йĕркеллĕ.
Çак çуттишĕн, ун кăмăлшĕн
кĕрнеклĕ,
Пур ирсĕрлĕх пуçтарăнаť
йĕркеллĕ.

Ӳсёрпеле вилме ђасах
кёрнеклё,
Пускилсемпе шăтăк алтма
йёркеллё!
Усал ёçшён прокурорсем
кёрнеклё,
Текех сута турткалаççё
йёркеллё.
Ытла усал ёç тусассăн
кёрнеклё,
„Шурă çург“-па паллаштараç
йёркеллё!!

## „МĂНКУНРА“.

Персе çитрё „Мăнкун“ тени
Карђăксен,
Хёпёртерё вăрăм çўçли
Ђёререн
Хатёрлерёç ерех-сăра—
Сăркавай,
Йанклаттарђёç хырăмалла
Пит самай!
—„Иссус Христос ђёрёлнё“ тет
Пађăшкă,
„Ђăн ђёрёлнё“—текелеççё
Сурăхсем.
Ђёрёлнине—никам курман
Тупата!
Ех пурнаççё... ёненеççё...
Пађăшка!

* * *

Ех-хай, Уххахха!
Мĕн ларасха
Пуç усса
Сурăхла!?
Рас, тва, Ăраман
Намăсран та хăраман,
„Мăнкун“ пирки хăйĕнне
Сутса ĕçнĕ пĕртен пĕр-пĕр
Сăхманне!
Акă çакă Васили
Арăслан пек ун çилли,
Русскăй коркки „ырлăхпе“
Калитленĕ арăмне
Çĕрĕпе!
Па-па Палушки
Кивĕ тĕнђе йулашки,
Ђаплă „мăнкун“ кăмăлне
Çăмах лартнă çăварне
Икĕ рас!
Мик-Мик Микулай
Праçник тунă пит самай!
„Ђаплă“ çутти тивĕçпе
Шаљђа тăрнă хырăмне...
Мĕн курас!?
Тĕмпĕл-тепмĕл Тимахви
Шампа ĕне хăраххи,
Кунĕн çĕрĕн ĕçнĕрен
Кĕрсе выртрĕ çĕр айне
Шеремет!
Мăђђи-мађђи Елекçей,
Тавай йурла веççелей!

Сан хырӑмра виҫ пулштав
Укҫу пӗтнӗ,—тав, мухтав!
Ђӗрӗлен!..
Ђалӑш сӑмса Унеҫҫи
Хуйхусем сан пӗтеҫҫи!?
Сӑмакункӑ тунӑран
Ҫаклантӑн та—ма хӑран?
Тӳле, штрав!...
Ех, „мӑнкун“ ес, „ыр мӑнкун“
Тинех ҫитрӗни?
„Сурӑхсенӗн“ кӑсйине
Йакататӑн тӗппипех
Ка-тӑр-шча-ай!

## МӐКӐРИЂЂИ ЙУРРИ..

Ђетвӗрт тулли сӑмакун
Шӑрши уҫӑ ырӑ ун,
Витре тулли сар сӑра
Тӑр шыв пулатӑ хырӑмра.
Хаайтӑ! тесен хайхи пур,
Ҫупкӑ ҫиме карђӑк пур,
Ӗҫтерсессӗн пуҫана
Туш йуратат вӑл мана!
Пурӑнма пур хура пӳрт
Хӑрӑм пулатӑ унта ӳт,
Куҫӑм тулли сарӑ пӳр
Ӗҫес карђӑк, сӑра кӳр!
Хӑлтӑр-халтӑр витере
Хытканланнӑ кӗсрем пур,
Сутанасӑр ват инке,
Ма ӗҫместӗн кала мур?
Мункун ђухне вунӑ пӑт

Ĕçсе çиме пĕлтĕмĕр,
Çĕтĕкленнĕ йĕм çине
Саплăк лартма пĕлĕпĕр.
Пултарăпăр, пурнăпăр,
Ĕçмесĕрех пурнмăпăр,
Урлă пыран çынсене
Хăлха ђикки парăпăр!
Ей, кармунис, турткала!
Шăтăк-шатăк купăсна
Хаљ ташласа кăтартам
Сире куçран пăхтарам!
Айну! майну!
Урлă-пирлĕ урамсем,
Мĕне кирлĕ пурлăху,
Ĕçĕр çийĕр, тăвансем
Хааайт̆!!!

## ЕЙ ПУЛТАРАТ̆!

Тултан пăхма хуннĕм пӳрђĕ
  Нумай мала кантуртан,
Çак вăхăтрах пӳртĕн ăшĕ
  Виç хут кайа клаçетран!
Пӳрт урайне тахçан çунă,
  Астумаççĕ пĕри те,
Навуспала тулсах ларнă
  Мĕскĕн урай хăммисем.
Пиллĕк çулхи Пăракухĕн
  Пӳрпе тулнă куçĕсем,
Йанах тăрăх сăмсисенђен
  Йухса аннă сăссисем.
Питне ир-каç çуман пирки
  Пĕр нĕрĕ çук, тупата!

Ёнси çине çарăк аксан
  Шиккарнийех шăтмалла.
Пўрт урайпе арçурилле
  Ђупса çўреç кролёксем,
Унта-кунта, пур йенђе те
  Выртаç вăсен шăршлисем.
Апат çийес ђашăкёсем
  Сётел айнђе лараççё,
Кёрписене кушакёсем
  Лёпёрт-лёпёрт çулласçё.
Çтена тăрăх тараккансем
  Тройккăсемпех ђупаççё,
Йашка çаксан пулккипелех
  Хуран ăшне ђăмаççё.
Каç пулсассăн камантипех
  Хыçкаланаç паттăрсем,
Мунђа кёмен тивёçпелех
  Куштанланнă кёççисем.
Алăк çумђе пёђёк хёрё
  Выртаť аран йăнăшса,
Хуннём куçне ђавкаласа
  Кайма шутлаť йумăça.
Çурăмран „леш“ çыртсассăн та
  Турă йатне асăнаť,
Ёçкё тусан çавах тата
  Тăрстти! тăрстти сиккелет!
Ытла паттăр манăн хуннём —
  Пит хастарлă—пултараť,
Пёђик шёпён тухсассăн та
  Йумăç патнех ђавтараť!

# ЕХ МА!

(Копператтăр йурри).

Копператтăр пултăм та,
Ђунăм карĕ савăнса.

Ех ма!

Канихватпа, шушкăпа
Ђей ĕçетĕп йаланах.

Ех ма!

Пурнăç манăн пыл та çу
Кĕске манăн калаçу.

Ех ма!

Кам хăйматлăх, кунта кил
Пĕр сăмахсăр парăп, ил.

Ех ма!

Урлă пирлĕ çынсене
Веç—кăтартăп лерелле

Ех ма!

Укçа манăн пĕр кăрман,
Кассă кăна пит айван.

Ех ма!

Ђунăм карĕ савăнса
Аран лекрĕм курорта.

Ех ма!

Хырăм пулђĕ параппан,
Мушиксем çеç пит хыткан.

Ех ма!

Пӳрт çурт лартрăм, кил те кур
Тем тесессĕн—тем те пур.

Ех ма!

Аай çырлахах, мĕн курас,
Таçтан килђĕ усал сас.

Ех ма!

„Капкăн“ çинђе ман çинђен
Темскер çырнă çĕтĕк йĕм!

Ех ма!

Проккурорсем, йĕксĕксем,
Ан килђĕрех йĕрлеме.

Е-ееех маaa!

## ЛЕНКРĔМ ЛАККĂМА.

(Курсантсемпе студентсем хушшинђе пулма пултаракан йапала).

Вĕренесшĕн пĕлтĕр епĕ
Çунтăм шутсăрах,
Ах мĕнле ман кĕрес тетĕп
Хăвăртрах шкула.
Çу каçиђђен хатĕрлентĕм
Вĕренме кĕме,
Вăхăт çитрĕ тинех ленкрĕм
Епĕ хайхине!
Ех мăнтарăн совет шкулĕ,
Пурнăç пулђĕ рай!
Вĕрентесшĕн тăрăшаççĕ,
Тумлантарђĕç хаљ!

Кĕрсенех пит тăрăшаттăм
Епĕ вĕренме,
Кайран к ђорту! алпа султăм
Пултăм çĕнĕлле,
Мана саврĕ пĕр курсантка
Йалкăшаť ђĕре,
Ђăтма çукка йурататăп
Халĕ çав хĕре!
Каç пулсассăн вĕçтеретпĕр
Текех контсерта,
Ташламашкăн йалан хатĕр,
Ўркенмест ура!..
Тепĕр кунне çуркунђенех
Выртап çывăрса,
Тĕлĕкре те тусăмпала
Йалан ташăра.
Тўшĕн сăвă çырнă майĕ
Ђунăм хĕпĕртет,
Ну топпир йат ђаплăланђĕ,
Епĕ кам?—Поет!
Çур пăт хута сайа йатăм
Сăвăсем çырса,
Ретаксинђе архивлана
Йăлтах—ман сăвва.
Ех тарăхрăм, ђунăм кўтрĕ
Карăм йатлаçма,
Мĕн шайтаншăн архивлерĕн,
Кала, Ваçанкка!?.
Кашнă каçах тусăмпала
Кулет тунине,
Есех ăна пултарас çук—
Çырма, Упăте!

Ђут çупаттăм Ваçанккана
  Хулха ђиккинђен,
Кели ђарђĕ алран тытса
  Муђи куриђђен.
Кунĕн-çĕрĕн куљђанатăп
  Сăвăмсем пирки,
Савнă тус та хырăмланнă
  Кун пек мĕн латти!?
Йалти арăм мĕскер калĕ
  Ку ĕçе пĕлсен,
Ех мăнтарăн йатăм çĕрђĕ,
  Хуйăх ђĕререн.
Хыткан кĕсре майлă вăхăт
  Ђупаť малалла;
Сисмесĕрех çитсе тăтăм
  Усал сађђота.
Ей, йулташăм, тархаслатăп,
  Кăшт каламăнши,
Тăхăр çумне улттă хушсан,
Миçе пулаťши?..

## САМАКУНККĂ.

(Шупуççынни технĕккипе)

Мухмăр муђĕш
Самакункка,
Маттур есĕ
Шăршлă шыв!
Ĕçкĕ-çикĕ
Хатĕрлесен,
Епĕр сана
Тăватпăр.

Анђах есĕ
Урлă-пирлĕ,
Тĕлĕнмелле
Пулатăн.
Ĕçсен-ĕçсен
Ăша илсен,
Вилсе кайм а
Манер пур!

Сăна ĕçсен
Манăн ђĕрем,
Шăмшак канлĕн
Туйăнаť:
Çавăнпа та
Ыраша та,
Саншăн епĕ
Шайламас.
Çултаläкра
Сана туса,
Ал пăт ыраш
Пĕтереп.
Сан пекех еп
Йурататăп,
Сарă тĕслĕ
Сăрана.
Сăра тути
Хăмла йўççи,
Самакункка
Ђухлĕ çук!
Хăш-ђух саншăн
Çын курманшăн
Лаç çуталаť
Çулăмпа,
Аптрамалла
Ун ђух вара,
Ес кил çурта
Пĕтерен!
Çавах сана
Йанклаттарсан,
Каллех хуйхă
Çухалаť.
Тавах сана
Самакункка!
Шăршу санăн
Хăватлă.
Сана ĕçсен
Хутте ђухăн
Тăрстти-тăрстти
Ташлатпăр.
Санăн пирки
Милитсисем,
Питĕ хытă
Йĕрлеççĕ.
Тытсан вара
Йухтарнă ђух,
Виç хут тире
Сĕвеççĕ.

## „ЕЙ ТУРĂ ÇЫРЛАХ".

Çăварни иртсен типĕре
Пупсем „ĕçлес" ђиркўре
Типĕ тыттараççĕ.
„Çылăх тунă" çынсенне
„Каçарас" теç „çылăхне"
Хытă тăрмашаççĕ.

Тур амăшне кĕл тăвăр
Иссуссне те ан манăр
— Есир! текелеççĕ.

Турă кăмăлне ун умне
Çурта лартăр йĕркипе
Ей, пуççапăр! теççĕ.

Паҫăшкăсен сăмахпе
Карҫăккисем çĕрĕпе
Турра тархаслаççĕ.

Старикпеле вăрçнине
Турҫка йăтса ҫупнине,
Иссусс каçарĕ...

Çăварни ҫух пулнине...
Алтансем пек вăрçнине
Веç каçартăр... теççĕ.

Ик-виç лаххан хăснине
Йетренамаť тенине
Каçар Иссус турă...

Тип çăкăрпа пурăнса
Типпе лайăх тытнăран
Славни шуралаççĕ!

Пĕр ернерен „çылăхне"
„Каçарттарса" ҫиркÿре
Киле ҫавтараççĕ!

„Таса пупсен" сăмахне
Улт-çиҫ ерне типпине
Тĕп-тĕрĕс тытаççĕ!

Паҫăшкисем ҫиркÿре
Урасанăн кăмăлне
Укçа тултараççĕ!

Мăнтăрланса, самăрлса
Пупсем çӳреç ђаккаса
Çӳç-пуç вĕçтереççĕ.
Ул-çиђ пăтлă ӳђĕсем
Нӳхреп мăнáш куçĕсем
Типпе тав тăваççĕ.
Пупсем килте, типĕре
Аш-çу, çийеç пикенсе
Типпе „пăхăнаççĕ“.
Пуп хырăмĕнђе,—тĕрлĕ аш
Матки çумĕнђе—ўшăн йаш
„Ей турă çырлах“!

* * *

## ÇĂВАРНИ.

Аран çитрĕ çăварни
Çулла—пуçани,
Хăçан килен... текенни
Кĕçĕн çăварни!
Урам хушши йанн, кайаў,
Йурă сассипе,
Катађђейĕ ахăраў
Ерех вăйĕпе.
— Çăварни çуни—çут çуна
Мĕншĕн куљђанас!..
Сопак Петĕр кăшкăрса—
Пĕрĕхтерет сас.
Çăварнийĕн кăмăлне
Уксак Хĕветле,—
Çуна çумне ленктерсе
Хусна пилĕкне.

Ђёлём лӑйми Ваçили
Праçник майёпе,
(Араслан пек ун çилли!)
Кӑнтнӑ арӑмне.
Ех çӑварни, çӑварни!
Тинех çитрён-и?
Мён ђул уксак, кӑвак пит—
Йалта тулђё-ши!?

## ХАЉХИ ЂАСТУШКӐСЕМ.

Ах ђӑнахши ман лашам
Çула тухсан ђӑхӑмлё,
Савни сарӑ Микулам
Йе ђӑнах та сивёнё?
Ман куç умёнђех ёнер каç
Ёне иккё ёсёрђё,
Вырӑн çинех кёçер каç
Савни килсе çывӑрђё.
Савни патне хӑнана
Çăркаç кайма шутларӑм,
Анђах ашшё курё те
Намӑс тесе хӑрарӑм.
Ех савни ман пит хитре
Çулё çирём иккёре,
Ђунӑм савнӑ сар Йӑван
Алиментшӑн ан куљљан.
Ула лаша хашкаса
Манпа навус тӑкрё,
Савни мана йуратса
Пёркун ыталарё.

Ђунăм савнă Йăвана
Курас килми пулђĕ,
Мана манса, Йеђука
Тутăр илсе пађĕ.
Кикик-какак хур пырат̆
Пăрăн унтан ђăхă,
Мана Йакку йуратат̆
Анђах сăмси мăнă.
Кикирикик сар алтан
Сарă ђăха йуратат̆,
Ђунăм савнă ыр Йăван
Илеп тесе йумахлат̆.
Ула ёне пăрунне
Тытрăм ёнер хўрине,
Пăру хўри тĕп пултăр
Ђун савнийех сыв пултăр.
Унталла та, кунталла
Сысна пырат̆ çухăрса
Çулла кађђа каймалла
Анђах папак хырăмра.
Микулайăв Вађушка
Ăçта тухса тартăн?
Их çырлахах ес мана
Намăс кăшлаттартăн.
Ёнер măйран пăвнипе
Манăн ађа вилнĕ,
Мана хупма тĕрмене
Ик милитси килнĕ.
Çăркаç уйăх çутине
Вупăр карђăк çирĕ,
Манăн çамрăк кĕлетке
Йуратупах пĕтрĕ!

# ПУРНĂÇ ШĂТĂКЁ.

(Маттанккă кёввипе).

Кил-çурт тăрри çётёк-çатăк ( 2 хут
Тумтирёмсем йăлтах саплăк (

Тыт, хупахçă, укçине
Тавай пире ереке!

Йăлтах пётрё çимелли ( 2 хут
Мёнпе çăнăх илесши? (

Ана-çаран тара пар
Купăс ил те йара пар!

Пўрт мёскерле лартас-ши? ( 2 хут
Ăçтан укçа тупас-ши? (

Лаша сутас васкаса
Çатлаттарас ођколла!

Хамăн ђунăм савнине ( 2 хут
Ыталарăм пёр каçне (

Алиментран хăрас мар,
Айта, иптеш, йара пар!

Савнă хёрён кăмăлне ( 2 хут
Мёнле çаврас хам йенне (

Тырă сутса ун валђи
Илес тутлă çимелли!

Хурал пўртне кётём те ( 2 хут
Ђут вилеттём тётёмпе! (

Тавай туртас ђёлёмне
Лăйма тултăр ўпкене!

Куçа пулђё темскер мур ( 2 хут
Йёри таврах тулђё пўр (

Ма каймастăн йумăça
Шалкким саншăн виç рупђа!

Çитук Петёр ман çине ( 2 хут
Тек хушаĭ тет арăмне! (

Еҫтер тулĕк ҫуттине
Вара ђармĕ арăмне!

Пуҫ ыратаť мĕн тăвас (
Ђăхăмларĕ манăн сас! ( 2 хут

Еппин есĕ, «сывă мар»
Пивнойалла йара пар!

Кушак Петĕр маткине (
Ҫыртса татнă сăмсине! ( 2 хут

Нумай пурнмĕҫ ан хăра.
Кĕҫех кайĕҫ уйăрлса!

Пирĕн Паљук авланса (
Илнĕ хыткан пĕр майра ( 2 хут

Лаша сутас,—ђас пайан
Тавай илес сараппан!

## С Ы С Н А.

(Йуптару)

Сысна путек сурăха
Тĕл пулђĕ картара.
Йуратрĕ ăна ђўнтанах
Ђăнахах.
—Илетĕп!
Тупата кађђах илетĕп.
Ан тăр тек, тусăм, туртăнса,
Кўр ђас тутуна...
Хаљ саккун хушаť йуратма!—
Текелет сысна
Лешне астарса.
—Те ђăнах ес калан...
Анђах... те кулан...
Хăратăп ҫав санран.
Ан кул ес манран,—

Текелет çур сурăх
(Мĕн калăнхэ урăх?)
—Е-е-ей çав! „Хăратăп“ тет.
Пăрах хăрама,
Ђĕрем ман сан пирки тĕлкĕшет.
Ђăн калап, еп суймас тупата!
Хай путек сыснана ĕненђĕ,
Пĕр-пĕрне икĕш те ђуп турĕç,
Вилеђђен йуратма сăмах пађĕç.
Пуçланђĕ йурату
Пурнаççĕ пыл та çу!
Анђах
Ђăнахах,
Йуратун хăйĕн çулĕ пур—
Ђипер çул çинђех лакăм, мур!
Пурăнсассăн пĕр çул хай путек
Пуç усрĕ шеремет,
Пранларĕ, путек ĕмĕртет...
Сысна йуратмасť ăна тек!

## ТĂРАННĂ КАШКĂРПА ЛАША.

(Йуптару)

Капкăна пĕр кашкăр çакланнă,
Тапаланаť тухасшăн ђунтан,
Телейе леш те пит вирлĕ çаклатнă,
Темскер ту!—йамасť урарап.
Аптрарĕ хай кашкăр.
Темђул хутте кăшкăр.
Ларнă çирĕп хĕсĕнсе
Икĕ тапкăђ хушшине.
Кашкăрăн сасне сиснĕ майĕпе
Ђупрĕ те çитрĕ пĕр вăйлă лаша.

— Е-е, есӗ, кашкӑр! тупрӑн-им, тесе
Кулса пек каларӗ хайхине вара.
— Пулӑш-ха, тусӑм, ыр лаша!
Ӗмӗр ырӑ сунӑп еп сана,
Йывӑр кунра хуна та
Пулӑшӑп пур вӑйпала...
— Е-е, ӗнсерен пӑвса-и,
Йе пӗҫӗрен ҫыртса?
Терӗ хайхине лаша
Тӳрӗ сӑмахпа.
Кашкӑра темҫул тӑрантар,
Ун хырӑмӗ ҫавах выҫӑ,—
Капкӑнпа тӑранса пӑхха,
Емӗрлӗхе пулӑн тутӑ,
Тесе ҫупрӗ хай лаша
Хуҫи килне васкаса.
— Е-е-ей! лаша, халӗ хырӑм ман тутӑ.
Ҫийессӗм килмест нимӗн те.
Ан хӑра манран,—кил! пулӑш—
Кӑшкӑрат кашкӑр ҫӗтресе.

* * *

Ҫапла хӑшпӗр етемсем
Куштан, пит выҫӑ пулсан та,
Асӑнтарнӑ кун ҫитсен
Лараҫҫӗ лаках тӑранса!
Ун ҫухне тин кӑмӑллӑ
Йӑпӑлтатса пуплеҫҫӗ,
Ҫурӑ ҫухрӑмран ҫӗлӗкне
„Сыви“ тесе ҫӗклеҫҫӗ!

# ТАКАПА ШАПА.

Тĕл пулҫĕ така шапана
Кӳлленсе тăракан ушахра,
Пуçларĕ унпа сăмах
Ҫĕлхе çулласах.
—Ытла та маттурçке ес шапа
Пултаран тупа та,
Санăн сăн пуçу,
Илемлĕ куçу—
Шутсăрах,
Ҫăнахах
Ҫун уççи!
—Ак-ак-ак!
Ҫăн çак сăмах,
Терĕ шапа,
Тапратрĕ хăйпе мухтанма.
—Çапла çав! ҫăн-ҫăнах еп хитре
Пăхтарап хам çине çынсене,
Ман пек маттурри
(Паллах сăнсăрри!)
Урăх тусăм çук.
Еп çӳреп йалан вĕçтерсе
Пур пысăк çынсем хушшинҫе,
Ман йатăм пысăк,—еп шапа!
Ан манҫҫăр çынсем çакна.
—Анҫах, терĕ хай така
Ытлашши мухтанан хупала,
Пăрах йулташăм мухтанма
Унсăрах пуçăнас пурăнма.
—Çу-у-у-к, çу-ук!
Апа, как-как-как!

Калаçмас санпала,
Есĕ вĕт ђăнахах тăмçамка!
Çилленсе хайхи çак шапа
(Паллах, пăхрĕ те сив куçпа)
Ђăмрĕ кулĕ айнелле
Вăл карĕ шутсăрах çилленсе.

* *
*

Çапла хăш-пĕр етемсем
Хăйсене мухтасан йуратаççĕ,
Йăнăшне кăтартсан (курăн тем)
Çилленсе ђышкăсем кăтартаççĕ.

## ТАКМАКСЕМ.

(„Ех яблочко“ кĕввипе).

Нуккă, купăс йантăра!
Шăран урлă пирлĕ,
Шухăш килђĕ йурлама (
Тата мĕскер кирлĕ? ( 2 хут.
Капкăн тусĕ, еп—мушик
Еçпе тĕрмешетĕп,
Поетсемшĕн, ихихик! (
Çак кĕвве тĕрлетĕп. ( 2 хут.
Поетсем! Ех, поетсем!
Еккей ђаплăланђĕç:
Уйăх çинех хăшĕсем (
Хăпарса утланђĕç! ( 2 хут.
Тĕлĕкре леш, Хусанккай
Пушкинпах калаçнă тет!
Пăхăр, вĕçет, пай! пай! пай! (
Йарапланран иртерет. ( 2 хут
Хусанккай! Ех Хусанкай!
Ђăнах пултаратăн,
Йеççенина нипођђом (
Шывă куçаратăн... ( 2 хут.

Митта Йаккăлъ Васили
Туртнă ъăснă кĕввине,
Ех! Шалккă çав тери— (
Кăштах пуçĕ „Сĕрĕмре"! ( 2 хут.
Савнă тусăм хай Çаваç
Пăхăр, пуçне уснă!
Куљљанать, тет ирте каç... (
Те ъăваш, те туркка!? ( 2 хут.
А ниушлĕ Шупашкар
Саншăн кĕмĕл сăнлă мар?
Пўрократ... тен пўрократ... (
Ъăт! Вилме не плакать. ( 2 хут.
Уçăп Ваççи Алакер—
Прем шиккарни кăвалер...
Сăвву аван—„**кĕтетĕп**!" (
Апъăххву! Сунас,—пĕтетĕп! ( 2 хут.
Ула ĕне пăрунне
Навус тулнă хўрине,
Пăру хўри тĕп пултăр (
Поетсемех сыв пулъъăр... ( 2 хут.

# ТУПМАЛЛИ.

Н. ЙЕВТОККИМӐВ.


| | Стр. |
|---|---|
| Ҫӑн тӗн ывӑлӗ | 3 |
| Ҫӑпӑркка | 4 |
| Михала | 5 |
| Пӑрҫапа таракан | 7 |
| Ваҫҫук | 8 |
| Хура сысна | 11 |
| Ула сысна | 12 |
| Таркӑнсем | 13 |
| Пушарта | 14 |
| Атӑл хӗрринҫе | 15 |
| „Капкӑнӑн“ хӗллехи такмакӗсем | 17 |
| Равноправи | 18 |
| Картара | 19 |
| Паттӑр | 20 |
| Тавӑру | 22 |
| Шӑнапала пыл хурҫӗ | 24 |
| Сурӑхсем | 25 |
| Мӑкла такапа каҫака | 26 |
| Кӳршӗсем | 28 |
| Токлат | 29 |
| Инкек | 30 |
| Тӗнӗл пирки | 31 |
| Хӑнасем | 33 |

## М. АТТАЙ.

*Стр.*

Ĕççинђехи ирçинђе. . . . . . . . . . . . . . 35
Кĕтўç йурри . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Савăтра . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
Пеђђатнĕк . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Тăван йалта . . . . . . . . . . . . . . . 40
Йулашки каç. . . . . . . . . . . . . . . 41
Октăпĕр кĕвви . . . . . . . . . . . . . . 43
Ленинла пилет . . . . . . . . . . . . . . 44
Мĕншĕн куљђанас . . . . . . . . . . . . 46
Ђăваш хĕрĕсене . . . . . . . . . . . . . 47
Шанђăк . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
Тĕшмĕш Униççе . . . . . . . . . . . . . 50
Кĕрнеклĕ. . . . . . . . . . . . . . . . . 53
„Мăнкунра“ . . . . . . . . . . . . . . . 56
Мăкăриђђи йурри . . . . . . . . . . . . 58
Ей пултарать! . . . . . . . . . . . . . . 59
Ех ма! . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Ленкрĕм лаккăма. . . . . . . . . . . . . 62
Самакуйккă . . . . . . . . . . . . . . . 64
„Ей турă çырлах“ . . . . . . . . . . . . 65
Çăварни . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
Хаљхи ђастушкăсем . . . . . . . . . . . 68
Пурнăç шăтăкĕ . . . . . . . . . . . . . 70
Сысна . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Тăраннă кашкăрпа лаша . . . . . . . . . 72
Такапа шапа. . . . . . . . . . . . . . . 74
Такмаксем . . . . . . . . . . . . . . . . 75

Хакĕ 50 пус

Цена 50 коп.

Н. ЕВДОКИМОВ и М. АТТАЙ. КРАСНОЕ ЖАЛ
(сборник стихов).

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
1929 года.